Ял тăрăхĕсенче

# «Ял çынни мал ĕмĕтпе пурăнать»

***«Раççей Федерацийĕнче вырăнти самоуправление йĕркелессин пĕтĕмĕшле принципĕсем çинчен» 131 № Федераллă саккун вăя кĕнĕренне пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ. Асăннă саккунпа пурнăçа кĕрсе пыракан çĕнĕлĕхсене хăнăхса пыратпăр темелле. Апла пулин те яланхи ыйту – укçа-тенкĕ çитсе пыманни мĕн шутлани-палăртнине пурнăçа кĕртме ура хумасăр тăма пултараймасть. Уйрăмах тата тĕнчери экономика кризисĕ вăхăтĕнче бюджетри кашни тенкĕ укçана шутлама тивет.***

***Çак йывăрлăхран тухмалли мĕнле майсене палăртаççĕ, мĕнле шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ-ха паян Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче пурăнакансем? Çакăн пирки сăмах пуçартăм ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Виктор Иванович ЕГОРОВПА тĕл пулнă май.***

**– Виктор Иванович, ял тăрăхне эсир пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ ертсе пыратăр. Пĕлӳ те, опыт та çителĕклех темелле. Иртнĕ çул итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май тата кăçалхи задачăсене уçăмлатса мĕн калană пулăттăр?**

– Кирек епле ыйтăва татса парасси те, уйрăмах хальхи вăхăтра, укçа-тенкĕпе çыхăннă. Çавăнпа та сăмахăма унран пуçласа йăнăшмастăп пулĕ. Тӳрех каласа хăварасшăн, ял тăрăхĕн бюджечĕ ытларах уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налукран, пурлăх çине хуракан налукран тата çĕр налукĕнчен пухăнать. Анчах вĕсене питĕ пысăк суммăсем тесе калаймăн. Иртнĕ çул уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налука 120,6 пин тенкĕ, пурлăх çине хуракан налука 200,5 пин тенкĕ, çĕр налукне 170 пин тенкĕ пăхса хунăччĕ. Унсăр пуçне 1580,3 пин тенкĕ каялла тавăрса памалла мар дотацисемпе субсидисем уйăрса панă. Пĕтĕмĕшле вара бюджет тупăшсем тата тăкаксем енĕпе те 1961,2 пин тенкĕпе танлашрĕ. Кăçалхи çул валли те эпир бюджет тăкакĕсене кăшт кăна сахалрах – 1907,2 пин тенкĕ палăртрăмăр. Анчах та бюджета 444,8 пин тенкĕ дефицитпа йышăнма тиврĕ. Çавăнпа та çак сумма чухлĕ хушма укçа-тенкĕ бюджета хывма майсем шырасси кун йĕркинчен тухмасть. Пурлăх, çĕр, тупăшран илекен налуксене пухассипе çирĕпрех ĕçлемелле, май пур ытти çăл куçсемпе те усă курмалла.

Ял тăрăхĕн территорийĕнче харпăр хăйсен магазинĕсем 2, предприниматель ĕçне кӳлĕннисем те 2 çын. Вĕсем ăнăçлăрах, тупăшлăрах ĕçлесе пыни те ял тăрăхĕн бюджетне пуянлатма май парĕ. Культура çурчĕсенче тӳлевлĕ мероприятисем ирттерессине те манăçа кăлармалла мар.

**– Кирек епле ял тăрăхне пырсан та чи малтанах ял çыннине канăç паман газ, çул тата шыв ыйтăвĕ мала тухса тăрать. Сирĕн патра ку енĕпе мĕнлерех-ха?**

– Газ пирки калас пулсан, ку ыйтăва 4–5 çул каяллах татса панă темелле. Асфальт сарнă йĕркеллĕ çулсем те кашни ял патнех илсе çитернĕ. Шел пулин те, ял хушшисенче çулсем тумалли çук мар. Акă Сосновка ялĕнче йĕркеллĕ çул çук. Кунта 1 километр ытларах çула епле пулсан та йĕркене кĕртмеллех.

Ялсене шывпа тивĕçтерессси хальхи вăхăтра вырăнти Ильич ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăх çинче. Шыв башнисем унăн харпăрлăхĕнче. Иртнĕ çул хуçалăх çĕнĕ шыв колонкисене 5 туянса пачĕ. Ял çыннисем пулăшнипе вĕсене вырнаçтарса тухрăмăр. Кунсăр пуçне ял урамĕсенчи çăлсене пăхса тăрассине те манмастпăр. 2009 çулта та 4 çăла тĕпрен, теприне кăштах юсарăмăр. Çапах та Уйкас Апашра юсамалли çăлсем пур-ха.

**– Кăçал урамсене электрификацилес тĕлĕшпе республика президенчĕн программи вăйра. Унпа килĕшӳллĕн мĕнле ĕçсем туса ирттерме планлатăр?**

– Асăннă программăна çак çулталăклăха кăна йышăннă май, мĕн пур ĕçе кая юлмасăр туса ирттерме тивет. Пĕтĕмпе 5 урама электрификацилеме палăртнă. Çавна валли техусловисене янтăласа çитернĕ ĕнтĕ. Мартăн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр вара проектсене хатĕрлесе çитересшĕн.

**– Хăш-пĕр çĕрте масарсем юхăнса кайнине курма пулать. Тĕрĕссипе çакă вăл пирĕнтен уйрăлса кайнисене, ваттисене эпир мĕнле хисеплени, сума суни пулса тăрать вĕт-ха. Хăвăр патри масарсенчи йĕркелĕх пирки мĕн калас тетĕр?**

– Пирĕн ял тăрăхĕн территорийĕнче 2 масар. Уйкас Янасал масарĕ тавра карта тытса çавăрнă. Уйкас Апаш масарĕ тавра та карта тытмалла пулать. Уйкас Янасал масарĕ çинче çӳп-çап пухма ятарлă контейнер вырнаçтартăмăр. Сăмах май, кун пек контейнерсем магазинсем, учреждениcем патĕнче те пур.

Тирпей-илем, тасалăх пирки сăмах пуçартăмăр пулсан, çавна та каласа хăварам. Территорире çӳп-çап тăкса тултарнă вырăнсем пурччĕ. Иртнĕ çул вĕсене тасатса тирпейлерĕмĕр. Çак ĕçе ытларах ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă уйăрса панă çынсен вăйĕпе пурнăçлама май килчĕ. Кунсăр пуçне шкул ачисем çулленех йывăçсем лартас, тавралăха иемлĕрех тăвас ĕçсене активлă хутшăнаççĕ.

**– Депутатсемпе çыхăнса ĕçлесси мĕнле пулса пырать?**

– Иртнĕ созывра депутатсен ял тăрăхĕнчи Пухăвне 9 депутат суйласа хăварнă. Пуху ларăвĕсене тăтăшах ирттеретпĕр. Кирек епле пĕлтерĕшлĕ ыйтăва та Пухусенче татса пама тăрăшатпăр. И.В. Михеев, С.Г. Никифорова депутатсене ырăпа асăннă пулăттăм.

**– Вырăнсенче пушарсем тăтăшах тухни никама та канăçсăрлантармасăр тăма пултараймасть. Çав вăхăтрах хăш-пĕр ял тăрăхĕсенче пушар хуралĕсене тытса тăма мехел çитерейменççĕ. Виктор Иванович, эсир мĕнле татса паратăр асăннă ыйтăва?**

– 2008 çулта, укçа-тенкĕ сахал пулнă пирки, пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерме бюджетра 8,6 пин тенкĕ кăна пăхса хунăччĕ, кăçал вара «Ударник» хуçалăхпа килĕшӳ туса 65,5 пин тенкĕ куçаратпăр. Çак суммăна бюджета хывса хăварнă ĕнтĕ. Йӳçкассинчи пушар хуралĕ малашне Чуманкассипе Шетмĕпуç тата Уйкас Янасал ял тăрăхĕсенчи пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерессипе те ĕçлесе пырĕ. Пушар деповĕн икĕ автомашини пире тивĕçтерме пултарать.

**– Çавна та пĕлес килет. Çĕр участокĕсене, çĕр пайĕсене харпăрлăха куçаракансем, килти хушма хуçалăха аталантарма кредит илекенсем пур-и тата?**

– 1 гектара çитерме хушма хуçалăх валли 60 сотка çĕрсене илекенсем 70 процента яхăн. Çĕр пайĕсене те 150 çын харпăрлăха куçарса регистраци палати витĕр тухнă. Ытларахăшĕ килĕшӳ туса çĕр пайĕсене пĕрлешӳллĕ хуçалăха арендăна парать. Уншăн вара хуçалăх вĕсене улăмпа, тырăпа тивĕçтерет. Хушма хуçалăха аталантарма çăмăллатнă кредит илекенсем те сахал мар. Апла пулсан ял çынни малашлăхах пăхать, мал ĕмĕтпе пурăнать.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

Район администрацийĕн кунĕнчен

# Пĕр-пĕрне ăнланни пулмасан

***Район администрацийĕн черетлĕ кунĕ февралĕн 26-мĕшĕнче Оринин ял тăрăхĕнче иртрĕ. Район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсем, федераллă службăсен районти управленийĕсен ертӳçисем тата ыттисем çав кун ку территорире вырнаçнă «Оринино» тата «Восток» пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен производство объекчĕсенче, вĕрентӳ, культура тата сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсенче пулса курчĕç, коллективсемпе тĕл пулчĕç, ăнăçсăр шутланакан çемьесене çитрĕç, хыççăн вара Оринин шкулĕн актовăй залĕнче пухăнса ял çыннисемпе тĕл пулчĕç, итогсене пĕтĕмлетрĕç.***

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем пирки калас пулсан, чăнах та ĕнтĕ паян производствăна аталантарса пыма çăмăлах мар. Фермăсенче пулса курнă хыççăн та çакна аван туйса илетĕн. Мĕн пуррипех çырлахма тивет. Выльăх-чĕрлĕх витисенче капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттересси, çĕнĕ производство линийĕсем хута ярасси пирки ĕмĕтленмелли кăна юлать. Ку вăл пĕтĕмпех пысăк укçа-тенкĕ хывассипе çыхăннă. Çав вăхăтрах ӳсен-тăран, выльăх-чĕрлĕх продукцине сутма майсем сахалрах. Пĕр енчен, вĕсене вырнаçтарассипе ăш хыпать, тепĕр енчен тата сутăн илмелли хакĕсем те вунă çул каяллахи пекех. Çынсене ĕç укçине вара тӳлесех пулать, тĕрлĕ налуксене вăхăтра тӳлемесен те пуçран шăлмаççĕ. Çав вăхăтрах тĕрлĕ оборудование, строительство материалĕсене, топливипе удобренисене вунă çул каяллахи хакпа туянасси тĕлĕкре те тĕлленмест. Апла пулин те пысăк укçа-тенкĕпе çыхăнманнисене те пулин пурнăçламаллах. Ун пеккисем вара объектсене пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерес енĕпе, çынсене инкек-синкексĕр ĕçлеме майсем туса парассипе те çук мар.

Ял тăрăхĕн иртнĕ çулхи ĕçне-хĕлне те япăхпа хаклас килмест. Çакă район администрацийĕн кунĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май ял çыннисемпе тĕл пулнă чухне ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.С. Суриков иртнĕ çулхи ĕç-хĕл пирки туса панă отчетран та курăнать. Акă конкурса хутшăнса ял тăрăхĕ ЧР Президенчĕн 15 миллион тенкĕ премине тивĕçме пултарни пысăк тĕкĕ пулнă. Унпа Культура çуртĕнче юсав ĕçĕсене пурнăçланă, 4 фельдшер пунктне йĕркене кĕртнĕ çĕрте усă курнă.

Пысăк ыйту вăл – çул ыйтăвĕ. Территорири 14 ялтан хальхи вăхăтра 5 ялта йĕркеллĕ çулсем пур. Ыттисем тĕлĕшпе çул тума проектсем хатĕрлеççĕ. Вăрманкасси ялĕпе илес пулсан, кун пек проект хатĕр те ĕнтĕ. Çу кунĕсенче вара май килнипе хăйăр, вак чул сарса вырăнвырăн юсав ĕçĕсем туса ирттерме тивет. Кăçал та ку ĕçсене малалла туса пыма палăртаççĕ.

Иртнĕ çул 5 ялăн уй хапхисене çĕнĕрен вырнаçтарнă. 2 масар çинче йĕркелĕхе кирлĕ шайра тытса тăраççĕ. Çу кунĕсенче кунта тасалăх кӳрессипе йĕркелекен субботниксене ял çыннисем активлă хутшăнаççĕ.

Атапайри, Оринринти тата Мулкачкассинчи Культура çурчĕсемпе клуб тата библиотекăсем япăх мар ĕçлесе пыраççĕ. Халăх коллективĕсем – иккĕ. «Шуракăш» халăх ансамблĕпе халăх театрĕ – район çыннисен яланах кĕтнĕ хăнисем.

Халăхпа пĕрле ял уявĕсене йĕркелесси йăлана кĕрсе пырать. Пĕлтĕр те кун пек уявсене 4 ирттернĕ. Кунпа пĕрлех çуллен 10–11 спорт ăмăртăвĕ иртет. Вăл шутран пĕри – республика шайĕнчи ăмăрту, 5-шĕ – район шайĕнчисем.

Территорире 7 çĕнĕ урам. Вĕсенчен 3-шне электрификациленĕ. ЧР Президенчĕн программине хутшăнса, ыттисене те кăçал çутă пама палăртнă. 1 урамĕ валли проект хатĕр ĕнтĕ, тепĕр 3 урам валли документсем хатĕрлесе çитереççĕ.

Апла пулин те халăхпа куçа-куçăн тĕл пулнă чухне вĕсене хумхантаракан ыйтусем те сахалах пулманни куçкĕрет. Тĕл пулусенче сиксе тухакан тĕп ыйтусенчен пĕрне – шыв ыйтăвнех илер. Иртнĕ çул хуçалăх ĕçченĕсен пухăвĕсенче шыв башнисене тытса тăрассине Оринин ял тăрăхне шанса пама йышăннă пулнă. Анчах кирлĕ документсене хатĕрлесе çитерменнипе вĕсем «Оринино» хуçалăх çинчех шутланаççĕ. Апла пулсан вĕсене хуçалăхăнах пăхса юсаса тăрас пулать. Укçине тӳлесе тăнă çинчех Чамăш ялĕнче пĕр урам шывсăр ларни çынсене пăшăрхантармасăр тăма пултараймасть.

Шывпа тивĕçтерессси кам çинче пулнине пăхмасăрах паянхи кун шыв пăрăхĕсене çĕнĕрен чавса хурасси пирки ыйту тăма пултараймасть. Анчах та мĕн пуррине сыхласа хăварасси, вĕсемпе йĕркеллĕ усă курасси, пысăк укçапа çыхăнман юсав ĕçĕсене вăхăтра туса ирттересси хамăртанах килет.

Тепĕр пысăк ыйту – территорире пушар хуралĕ ĕçлеменни. Пушар сӳнтермелли машинăсем «Восток» хуçалăхра та, «Оринино» хуçалăхра та шутланса тăраççĕ. Анчах та вĕсене тытса тăрассине хуçалăхсем те, ял тăрăхĕ те хăйсем çине илесшĕн мар. Анчах пĕрле килĕшсе татăлсан çакă вăл татса пама май çук проблема мар ĕнтĕ. Ку енĕпе ытти ял тăрăхĕсен опычĕпе усă курма та пулать. Пушар вара хальхи вăхăтра епле пысăк инкек пулса тăни пирки самантлăха та манма юрамасть.

Ыйтусем тенĕрен, çак кĕске хайлавра пур ыйту пирки конкретлă та тĕплĕ чарăнса тăма май çук. Кусем вĕсем хуçасăр йытăсемпе кĕрешесси те, выльăхсен масарĕсене карта тытса чикĕлесси те, вилнĕ выльăхсене илсе пымалли Лантăшри пунктра йĕрке тăвасси те, Тереç тата Мулкачкасси ялĕсенчен ачасене ача садне турттарассине йĕркелесси те, ача садĕнче хĕллехи сивĕ кунсенче ăшă çителĕксĕр пулни те, хĕл кунĕсенче урамсене пурне те юртан кирлĕ пек тасатса тăрасси те, йĕркеллĕ мар çемьесемпе кирлĕ пек ĕçлесси т. ыт. те.

Çапла, ыйтусем пур. Ытти ял тăрăхĕсенче те вĕсем çук мар. Ĕçĕ кунта унра мар. Сăлтавне район администрацийĕн кунĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та, депутатсен районти Пухăвĕн депутатне ку территорирен суйланнă депутатсем В.И. Вязовпа В.А. Калинин та, ыттисем те уççăн тата тӳррĕн палăртрĕç. Хуçалăхсен ертӳçисемпе ял тăрăхĕн пуçлăхĕ хушшинче килĕшӳпе çураçу пулманни, вĕсем пĕри теприне алă пама килĕшменни чылай ыйтусене çивĕчлетет. Пĕр-пĕринпе килĕшсе ĕçлеме пултарнă пулсан вара кунта асăннă тата асăнман чылай ыйтусем тĕл пулура пулман та пулĕччĕç.

Çӳлте асăннине пĕтĕмлетсе çавна кăна каламалла. Чăвашсен яланах ырă йăла пулнă. Тĕрĕссипе пĕтĕм халăхăн та. Вĕсем кирек епле пысăк йывăрлăх е хăрушлăх килсе тухсан та пĕр çын пек пĕр чăмăра пĕрлешме, чăтăмлăх та тӳсĕмлĕх кăтартма пултарнă. Çапла майпа иртнĕ вăрçă çулĕсенче хăрушă тăшмана та çăварлăхланă. Оринин тăрăхĕнчи ертӳçĕсен вара çак енсем çитсех каяймаççĕ. Анчах манма кирлĕ мар: эпир хамăршăн мар, халăхшăн ĕçлетпĕр. Пирĕн хыçра – çынсен шăпи.

Район администрацийĕн кунĕнче Оринин тăрăхĕнчи вăрçă ветеранĕсемпе тыл ĕçченĕсене Аслă Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе юбилей медалĕсем парса чысларĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Шӳт

# КАМИЛЬ

– Итле-ха, итле, ырă çыннăм! – чĕнчĕ такам хыçра.

«Мана чĕнеççĕ-ши?» – шухăшларăм та çаврăнса пăхрăм.

Шăтарасла ман çине çӳллĕ арçын пăхать. Тумтирĕ лӳчĕркеннĕ, куçĕ-пуçĕ те яках мар, сухалĕ тăрлавсăр ӳссе кайнă тата, çӳçне кастарма васкамасть курăнать. Хĕрĕнкĕ мар хăй, тăптăр урах. Чăнласах мана чĕнет иккен.

– Кала-ха, тархасшăн, хăш пӳлĕмре ларать-ши çакăнта Камиль?

– Камиль?– тĕлĕнтĕм эпĕ. – Пĕлместĕп, пирĕн организацире çуккă ун пек ятлă çын...

– Мĕнле çук, ан тĕлĕнтер!– эпĕ çак çынна пĕлменнишĕн халь-халь чышкă парас пек тăчĕ арçын.– Камиле пĕлместĕнтĕк, мĕн туса çӳретĕн кунта. Халех кутран тапса кăларса ямалла кунтан сана. Камилĕ хăй пĕлес пулсан çакна...

– Мĕнлерех вăл апла пулсан, тен, ăнкарăп?

– Астумастăн-и вара, унччен «Сельхозтехникăра» КамАЗпа ĕçлетчĕ вăл. Эпĕ те пĕрле шоферта çӳреттĕм унпа. Эх, çамрăкчĕ эпир! Эх, тĕрлеттереттĕмĕр! Эрехсăра пĕрле ĕçнĕ, пĕр стаканран та пĕрне пĕри хăварман.

– Çук, аса илейместĕп «Сельхозтехникăри» Камиле...

– Кайран ПМК пуçлăхне турттарма кайрĕ. Пултарать çав Камиль! Çĕнĕ çулта çĕнĕ хваттер илчĕ, виçĕ пӳлĕмлине. Арăмне кӳршĕ организацире главбуха лартма пулăшрĕ... Пĕлместĕн-и вара?

– Çук-ха, ниепле те аса илейместĕп. Мĕн тума кирлĕ мана санăн Камилю, тепĕр тесен!

– Мĕнле мĕн тума? Кунта ĕçлет вăл! Хăв çав çынна палламастăп тесе тăратăн. Пĕлетĕн эсĕ ăна, питĕ лайăх пĕлетĕн! Вăн, кайран партие кĕчĕ вăл, Горькине ВПШ-на вĕренме ячĕç. Килчĕ те райкомра ĕçлеме пуçларĕ. Пĕрмай хуçасемпе юнашар çӳретчĕ, ах, йăпăлтиччĕ! Çук, мана нихçан та манман вăл. Тĕл пулсан яланах ал паратчĕ. Хисеплĕ калаçатчĕ. Кайран горгазра парткома ячĕç, унтан «Сельхозэнергора» инженер пулчĕ. Тем пысăкăш çурт туса лартрĕ. Техники те, стройматериалĕсем те бесплат пулнă. Аса илтĕни?

– Çук, ара, пĕр Камиль те, эпĕ астăвасса, парткомра ĕçлемен!

– Ну, калатăн та... Чăн ячĕ унăн Камиль мар, паллах. Хуçа пулнăран тутар ятне тăрăхласа панăччĕ эпир. Чăн-чăн ячĕ – Николай Алексеевич. Тавнах курман çав. Ялта пурăнатăп та, кунта, райцентра, пит сайра килетĕп. Пĕр вунă тенкĕ сăра ĕçме параймастчĕ-ши тенĕччĕ те...

Çак вăхăтра коридор вĕçĕнче пирĕн пуçлăх Николай Алексеевич курăнса кайрĕ. Ăна асăрхасан сухаллă арçын мана манчĕ те ăна хирĕç вирхĕнчĕ.

– Камиль, юлташăм, мĕнле-ха эсĕ пурăнатăн?– икĕ хутлă çурт кисренмелле кăшкăрчĕ вăл.– Миçе çул-ши курманни сана!

Кĕçех вĕсем пуçлăхăн пӳлĕмне кĕрсе çухалчĕç. Эпĕ пĕр хушă коридорта хускалмасăр тăтăм. «Шел,– шухăшларăм хам,– нумаях калаçса тăраймарăмăр ку арçынпа. Хуçа пирки тата мĕн чухлĕ çĕнни пĕлнĕ пулăттăм...»

**В. КОНСТАНТИНОВ.**